МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
МОСКОВСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПСИХОЛОГО-ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ УНИВЕРСИТЕТ
ДИАЛОГ РЕГИОНЫ
ИНСТИТУТ ИЗУЧЕНИЯ ДЕТСТВА, СЕМЬИ И ВОСПИТАНИЯ
РАЗГОВОРЫ О ВАЖНОМ
2026 ГОД ЕДИНСТВА НАРОДОВ РОССИИ

пурнăç

гражданлăх туйăмĕ

# ЦИФРА ХӲТЛĔХĔ (ХУЛКKАНĔ)

## Интернет тетелĕнчи хăрушсăрлăхăн тĕп правилисем



# 1-мĕшпе 2-мĕш классен «ЧИ КИРЛИ ÇИНЧЕН КАЛАÇАТПĂР» занятийĕн сценарийĕ

## 24-мĕш заняти
## Цифра хӳтлĕхĕ (хулкканĕ). Интернет тетелĕнчи хăрушсăрлăхăн тĕп правилисем

**Заняти ирттерекен кун:** 2026 çулхи пуш (март) уйăхĕн 2-мĕшĕ.

**Занятин тĕллевĕсем:** «кибергигиена» ăнлава ăса хываси; кибернетика хăрушлăхĕн тĕп тĕсĕсем тата вĕсене хирĕç тăмалли мелсем çинчен пухнă пĕлĕве анлăлатасси; ачасене цифра тĕнчи хăйне майлă талккăш пулнине шута илсе тата яваплăх туйса унпа хутшăнма вĕрентесси; уйрăм çыннăн цифра гигиенипе патшалăх хăрушсăрлăхĕ хушшинче тачă çыхăну пуррине кăтартасси; критикăллă шухăшлава тата цифра пĕлĕвне аталантарасси.

**Вăй илсе аталанакан пахалăхсем:** пурнăç, гражданлăх туйăмĕ.

**Тĕп шухăшсем**

- Уйрăм çыннăн цифра талккăшĕнчи яваплăхĕ вăл – хăйшĕн тăрăшни (ку тăрăшу обществăпа патшалăх хăрушсăрлăхне çирĕплетекен вăй пулса тăрать).
- Цифра йĕрĕ вăл – тĕрлĕ даннăйăн улшăнми пĕрлĕхĕ. Виртуаллă талккăшра вырнаçтарнă информаци патне çул пуриншĕн те уçăлать. Çавăнпа унпа усал шухăшлă кирек хăш çын та усă курма пултарать, интернетпа усă куракана сиен кӳрекен усал ĕç (вăл шутра саккуна хирĕçлекеннине те) тума май парать.
- Цифра тĕнчи вăл – патшалăхăн пĕрлĕхлĕ право талккăшĕ. Цифра талккăшĕнче правăна хирĕç ĕç тăвакансем пур. Вĕсем кашниех саккун умĕнче яваплă.
- Интернетра паллă марлăх е хăрушлăх лару-тăрăвĕ сиксе тухсан – пулăшу ыйтма полицие каймалла.

**Заняти тăршшĕ:** 30 минут.

**Занятие ирттерме сĕннĕ форма:** пĕлӳ паракан калаçу. Занятире видео материалĕсем курма палăртнă, ушкăнпа хутшăнса тата пĕччен тумалли ĕçсем пулаççĕ.

**Материал комплекчĕ:**

- сценари;
- меслет сĕнĕвĕсем;
- хушма материалсем;
- видео материалĕсем;
- ушкăнпа тумалли ĕç;
- практика ĕçĕсем;
- презентаци.

**Заняти тапхăрĕсем**

**Мотивацийе тĕллевлĕх тапхăрĕ:** анонс видео роликне курни, калаçу, ушкăнпа тумалли ĕç.

**Тĕп тапхăр:** видео курни, калаçу, практика ĕçĕсене пурнăçлани.

**Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ:** калаçу.

## Мотивацийе тĕллевлĕх тапхăрĕ

*Учитель **Карина Каграманяна ӳкернĕ анонс ролика** кăтартать.*

**Учитель:** Кĕр кунĕсенчен пĕринче эпир Тăван çĕр-шывăн цифра хăй тĕллĕнлĕхне халалланă занятире пултăмăр. Цифра хăй тĕллĕнлĕхĕ мĕн иккенне ас тăватăр-и?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Цифра хăй тĕллĕнлĕхĕ патшалăха аталантарма, кашни çынна хăй хăрушлăхра маррине туйма тата ун çинчен мĕн çырнине шанчăклă упранине пĕлсе тăма кирлĕ.

Ытти çынсене сиен кӳрес, улталас, ку е вăл информацие вăрлас текен çынсене эпир мĕнле сăмахпа палăртатпăр?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Цифра тĕнчи эпир пурăнакан чăн тĕнче майлă терĕмĕр. Чăн тĕнчере преступниксемпе ултавçăсем (мошенниксем) пур пулсан вĕсемпе цифра тĕнчинче те асăрхануллă пулмалла, кашни çынна шанмалла мар. Эпир хамăр киле палламан çынна кĕртместпĕр, ăна хамăр вăрттăнлăха каласа памастпăр-çке. Атьăр интернетра **мĕнле ыйтусем тавра калаçма юранипе юраманнине** сӳтсе явар.

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Палламан çынсене интернетра хăвăр ăçта пурăннине, вĕреннине каласа пама юрать-и?

– Палламан çынран сăн ӳкерчĕкĕ е адрес ыйтнă çыру килес пулсан мĕн тумалла?

– Интернетра мĕн пăхма юранине, унтан мĕнле текст пичетлесе илме ирĕк пуррине пĕлме сире кам пулăшаять?

*Ачасен хуравĕсем.*

*Учитель «**Интернетра вырнаçтарма юракан харпăр информаци**» темăллă ушкăнпа тумалли ĕç хушать.*

## Тĕп тапхăр

**Учитель:** Эсир аслăрах çынсем вĕреннĕ çĕрте тата ĕçре интернетпа тăтăш усă курнине пĕлетĕр: усăллă информаци шыраççĕ, çĕннине пĕлме пулăшакан е вĕрентекен видео кураççĕ, тĕрлĕ статьяпа кĕнеке вулаççĕ. Сирĕн шухăшăрпа, хăш сайтсене шанма юрать? Вĕсен сăн-сăпачĕ епле пулмалла?

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Усăллă информаци çумĕнче тĕлĕнмелле тата хăрушă ӳкерчĕксем пулма пултараççĕ-и? Вĕрентекен видео çынна хăратма пултарать-и?

– Чуна çырлахтарман, хăратакан материал (видео, фото т. ыт. те) ăнсăртран тĕл пулсан пирĕн мĕн тумалла?

– Паллă мар ссылкăсем тăрăх куçса çӳреме юрать-и?

– Сире вĕренме е çĕннине пĕлме кирлĕ материала тупмашкăн йывăр пулсан пулăшу камран ыйтма пултаратăр?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Интернетра эпир усăллă тата кăсăклă ĕç нумай тума пултаратпăр: уроклă сайтсенче çĕннине пĕлетпĕр, мультфильмсем куратпăр, тус-юлташпа вылятпăр. Кун пек сайтсем хăрушă мар тата ăнланмалла. Мĕн тесен те, интернетра, чăн пурнăçри пекех, палламан çынсем пур. Хăш чух сайтра эпир хăйсен питне сăн ӳкерчĕкпе е видеопа кăтартас темен, ячĕсене калас темен çынсемпе хутшăнатпăр. Вĕсем çапла хăтланнин сăлтавĕ, сирĕн шухăшăрпа, – мĕн? Ача çулĕнчен тухнă, явап тытма пиçсе çитнĕ çын мĕнрен вăтанма е мĕн пытарма пултарать? *(Учитель ачасене ултавçăсем хăйсене кăтартасшăн маррине, палласа илтересшĕн маррине, çавăнпа хăйсем çинчен тĕрĕссине каламаннине, пытарнине ăнланса илме пулăшать.)*

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Мошенниксем çынсем патне тăташах çыраççĕ, анчах хăйсем чăннипе кам иккенне ăнлантармаççĕ. Ку майпа ултавçăсем çынсене йăнăш шухăшлава кĕртеççĕ, хăйсем ăçта пулнине, чăн ячĕсене пытараççĕ. **Мошенниксем ĕç, укçа е мĕнле те пулин парне сĕнме пултараççĕ, çак майпа çынна йăнăш çулпа ярса хăйсене (ултавçăсене) кирлĕ ĕçе тутарма пултараççĕ. Ку вара питĕ хăрушă!** Атьăр пĕрле темиçе лару-тăрăва пăхса тухса тишкерер.

*Учитель* ***«Тетелте хутшăнни» практика ĕçне*** *тутарать.*

*1-мĕш лару-тăру:* Ваня палламан çынран çакнашкал хыпар илет: «Салам! Хăвăн вăйă аккаунчĕн логинпа парольне пар-ха тархасшăн – эпĕ сана100 ылтăн укçа парăп! Эсĕ вăйăра çĕнтерсе пыраканни пулăн! Ку вăл хăрушă мар! Сăмах

паратăп!» Ваня савăнса ӳкет те мĕн ыйтнине ярса парать. Тепĕр кунах Ваньăн аккаунтне çĕмĕрсе кĕреççĕ те – мĕн пур бонус çухалать, баланс пушанать. (*Занятин презентиацийĕ, 2-мĕшпе 3-мĕш слайдсем.)*

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Ваня ултавçа мĕншĕн шанать?

– Сиксе тухнă лару-тăру çинчен Ваньăн хăйĕн ашшĕ-амăшне мĕн таран хăвăрт каласа памалла пулнă?

– Çакнашкал сĕнӳ сире хăçан та пулин памарĕç-и? Тĕслĕхрен, вăйăра персонаж шайне çĕклеме, вайă персонажĕ валли тетте тавраш туянма, парнесем хăвăр валли илме сĕнме пултарнă.

– Ваньăна эсир мĕн сĕнĕттĕр?

*Ачасен хуравĕсем.*

*2-мĕш лару-тăру:* Серёжа çĕнĕ вăййа сӳтсе явнă май интернетра пĕр ачапа çыру çӳретнĕ. Ывăл ача Серёжăран вăл ăçта пурăннине, ашшĕпе амăшĕ мĕн ятлине ыйтса пĕлет. Тепĕр кунхине çĕнĕ «юлташ» Серёжăран вăйă бонусĕсем туянма кăшт укçа кивçен пама ыйтать: укçине кăтартнă адреспа ярса памалла пулнă. Хăйĕн укçа пулман та, Серёжа амăшĕ патне пырать. (*Занятин презентиацийĕ, 4-мĕшпе 5-мĕш слайдсем.)*

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Сирĕн шухăшăрпа, амăшĕ Серёжăна мĕн калĕ? Укçа куçарма ывăлне ирĕк парĕ-ши?

– Кун пек лару-тăрура мĕншĕн аслисенчен пулăшу ыйтмалла?

– Палламан çĕнĕ çын Серёжăран унăн адресне тата ашшĕпе амăшĕн ячĕсене мĕншĕн ыйтнă? Серёжа панă информаципе кайран усал тĕллевпе усă курма пултарнă-и? *(Вăл Серёжăна хăратма, хăратса пусахлама т. ыт. те тума пултарнă.)*

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Ултавçăсем (мошенниксем) хăйсен чăн ятне каламаççĕ, питне кăтартмаççĕ, çапах хăшĕ-пĕри тата чеерех хăтланать: хăйне кам вырăнне те пулин хурса калаçма пăхать. Тĕслĕхрен, вĕсем çынна унăн аккаунчĕн парольне калама е мĕн те пулин тума тесе кивçен укçа ыйтма пултараççĕ. Çак майпа ку е вăл çын **мĕнле те пулин усал ĕçе урăх çын ячĕпе тăвать, анчах преступленишĕн явап тытаканни аккаунтлă çын пулса тухать**.

*Сӳтсе явмалли ыйтусем:*

– Хăвăн даннăйсене интернетпа урăх çынна ярса пани мĕншĕн хăрушă?

– Сирĕн аккаунтăршăн укçа ярса пама хатĕр çынсене мĕнле хуравламалла?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Учитель:** Туслашас тесен пĕр-пĕрне лайăх пĕлес пулать. Интернетра темиçе кун хутшăнни çынна шанма çителĕксĕр. **Укçа тавраш нихçан та ан куçарăр** тата «пулăшма» ыйтсан та хăвăр аккаунтăра кĕмелли майсене ан кăтартăр. **Куна тума чăн-чăн туссем тата аслă çынсем нихçан та ыйтас çук.** Интернет ултавçисем «укçа ахальтен куçаракансене» е «вăхăтлăх усă курма карттă ыйтакансене» шыраççĕ. Ултавçăсем шыракан çынна **дроппер** теççĕ. Вăл ултавçăсене пулăшать: ют укçана илет (ăна малалла ытти карттăсене куçарать), карттисемпе е аккаунчĕсемпе хăйĕн преступленийĕсене пытарма усă курать; **ахальтен кăна пулăшатăп тесе шухăшлать, анчах закона пăсать.** Сире темле çын тем чикнĕ конверта такама пама ыйтать тейĕпĕр. Шалта мĕн пуррине пĕлместĕр, анчах унта мĕн те пулин усалли пулсан – уншăн **явап тытаканни хăвăр пулатăр, е сирĕншĕн аçăр-аннĕр явап тытать.** Преступление ăнсăртран, ним пĕлмесăр яваçакана **преступление хутшăнакан (соучастник)** теççĕ. **Куна та законпа явап тыттараççĕ.**

*Учитель ачасене **«Интернетри тыткаларăш правилисем» практика ĕçĕ** тутарать. Ачасем ку е вăл тыткаларăш тĕрĕс пулсан алă çупаççĕ. Йăнăш чух урапа тăпăртаттараççĕ.*

- *«Ют çын счетне укçа куçарсан сана 100 тенкĕ параççĕ». (Ачасем урапа тăпăртаттараççĕ.)*
- *«Аннӳ эсĕ вăйă выляса мĕн чухлĕ вăхăт irттернине пĕлме логин ыйтать». (Ачасем алă çупаççĕ.)*
- *«Палламан çын çапла çырать: “Аккаунтун парольне пар та, эпĕ сана питĕ пысăк пултарулăх, питĕ пысăк вăй-хăват парнелĕп!» (Ачасем урапа тăпăртаттараççĕ.)*
- *«Сана паллă мар ссылкăпа куçса тĕлĕнтермĕш видео курма сĕнеççĕ. (Ачасем урапа тăпăртаттараççĕ.)*
- *«Интернетра санран пĕр палламан çын аçупа аннӳ ăçта ĕçленине ыйтать». (Ачасем урапа тăпăртаттараççĕ*
- *«Тусу санран килте мĕнле ĕç тумаллине ыйтать». (Ачасем алă çупаççĕ.)*

*Учитель ачасене **«Кибер хăрушсăрлăх» (Кибербезопасность) 2D ролик кăтартать.***

**Учитель:** Хăш чух интернетра **хăратакан е кӳрентерекен** ӳкерчĕксем, видеосем, мĕнле те пулин хăрушă япала тума ӳкĕтлекен пĕлтерӳсем, пароль е санăн даннăйсене пĕлтерсен пысăк парне пама хатĕр пулнине кăтартакан кадрсем тĕл пулаççĕ. Çакă пысăк сиен кӳме пултарать. **Кун пеккине курсан ссылка çине пусмалла мар, юлташсене ярса памалла мар – вкладкăна е приложение май пур таран хăвăрт хупмалла. Курни çинчен аслисене: аннĕре, аçăра е учителе – каласа памалла.**

Чăн пурнăçра хăрушсăрлăх правилисем (çул урлă симĕс çутă çуталсан тин каçмалла; электричество приборĕсене сӳнтермелле; кĕрекен алăка хупмалла т. ыт. те) мĕнлисем пур, çавнашкал правилăсем цифра тĕнчинче те пур. Ку правилăсене пăхăнни пире пурсăмăра та лапкăн пурăнма, законпа çын прависене хӳтĕлеме май парать.

## Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ

**Учитель:** Цифра технологийĕсем обществăна малалла аталанма пулăшма, çĕр-шывăмăрăн цифра енĕпе никама пăхăнманлăхне çирĕплетме кирлĕ. Шел пулин те, **мошенниксем аслисемпе ачасене улталама хăтланаççĕ, эпир интернетăн хăрушсăрлăх правилисене пĕлсен анчах вĕсене ăнăçлă хирĕç тăма пултаратпăр.** Атьăр цифра гигиенин[1] правилисене тепĕр хут пĕрле аса илер. (*Занятин презентацийĕ. 6-мĕшпе 7-мĕш слайдсем.*)

1. Хăвăрăн аккуаунтăрсене урăх çынсене нихçан та ан парăр, çынсенне те ан илĕр. Ку вăл хăвăрăн хваттер е кил уççине палламан çынна панă пекех. Сире кам та пулин укçа куçарма пулăшу ыйтать пулсан – ку ĕç хăрушă иккенне, ăна тума юраманнине асра тытăр.
2. Сетьре мĕн те пулин хăрушши, тискерри, хальччен пулманни курсассăн – малалла ан пăхăр, юлташăрсене ан калăр, çитĕннĕ çынна пĕлтерĕр. Асра тытăр: интернетра пурри пĕтĕмпе ырă та усăллă тенине пĕлтермест.
3. Шанчăксăр ссылкăсем çине ан пусăр.
4. Палламан çынсене хăвăр даннăйсене ан парăр.
5. Ăнланман япала тĕл пулсан ун çинчен яланах аçăр-аннĕре е учителе каласа парăр.
6. Парольсене çĕнетсе тăрăр. Вируссене хирĕç тăма пултаракан программăсемпе усă курăр.

*Вĕрентекен ачасене **ĕç хучĕсенче** пурнăçламалли ĕç парать.*

---

[1] Учитель валли хатĕрленĕ меслетлĕх ăнлантарăвĕ

- Палламан отправительтен илнĕ ссылкăсем тăрăх ан куçăр.
- Иккĕленӳ сиксе тухсан – хăвăр даннăйăрсене шанчăксăр çăл куçĕсенче пичетлесрен сыхланăр!
- Компьютера упрама – вируса хирĕç программăпа усă курăр.
- Шанчăксăр онлайн вăййсене ан хутшăнăр!
- Хăвăр даннăйăрсене: адреса, телефон номерне, документсен фотовĕсене, геолокацие – çын умне ан кăларăр.
- Кăткăс парольсемпе тата икĕ факторлă аутентификаципе усă курăр.

**Учитель:** Ку правилăсене пăхăнни сире йывăр дару-тăрăва лекесрен сыхлĕ. **Киберполици ĕçченĕсем ултавçăсене пур пĕрех тупĕç**, мĕншĕн тесен **правăна пăсакан кашни çын хăйĕн цифра йĕрне цифра тĕнчинче хăварать.**

*Çынна хăй çинчен шухăшлаттаракан ыйтусем:*

– Хăвăнпа çыхăннă информацие мĕншĕн интернетра сарма юрамасть?

– Интернетра кампа çыру çӳретмелле тата кампа туслашмалла?

– Сире сайтра, палламан çынпа иртекен çырулла хутшăнура тем пăшăрхантарса яни е хăратса пăрахни çинчен атте-аннене хăçан каласа памалла?

– Туйăмсене пăхăнманни, шухăшламан ĕçсене туманни мĕншĕн паха тата пĕлтерĕшлĕ? Туйăмсем хыççăн кайни мĕн енчен хăрушă?

*Ачасен хуравĕсем.*

**Юлашки калаçу**

**Хисеплĕ ĕçтешĕмĕрсем!**

**Сире тата вĕренекен ачасене Пĕтĕм Раççейĕн «Пĕрремĕшсен юхăмĕ» акцине хутшăнма йыхравлатпăр.** *(Занятин презентацийĕ, 8-мĕш слайд.)*

**Мĕн вуламалла?**

- Шарова Л. «Стоп Угроза. Безопасный интернет»

**Мĕн курмалла?**

- Мультсериал «Смешарики». Азбука цифровой грамотности, 2019

**Проект ĕçĕ тата урок тулашĕнче тумалли ĕç-хĕл, класс тулашĕнче ирттермелли мероприятиясем**

- «Цифра гигиенин правилисем» викторина: шкул ачисем викторина вăхăтĕнче кибернетика хăрушсăрлăхĕн правилисене аса илеççĕ.
- «Пĕрремĕшсен юхăмĕн» «Кибернетика хăрушсăрлăхĕн шкулĕ». Юлашки калаçу вăхăтĕнче мероприятие хутшăнакансене тантăшĕсен ăс паруçин

вырăнĕнче пулса курма май параççĕ. Кун валли «киберволонтерсем.хусканура пул.рф» (киберволонтеры.будьвдвижении.рф) проекчĕн страницине куçмалла, кирлĕ номинацие суйласа илмелле те заявка памалла. Вара цифра хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă теори материалне тĕпчеççĕ, Кун хыççăн вара тантăшсем, юхăмăн пуçламăш пайĕн (отделенийĕн) членĕсем, туссем валли çутта кăларупа çыхăннă «КиберУрок» мероприяти irttерме сĕнеççĕ. Унта хутшăнакан кашни ача цифра хутлăхĕн хăрушсăрлăхĕ çинчен хăй мĕн пĕлнине ыттисене каласа парать. Мероприятие irttермелли хушма материалсемпе форматсене çак ссылкăпа тупмалла: https://id.pervye.ru/projects/2387.

- КиберРаскраска: https://будьвдвижении.рф/files/raskraskakiberbezopasnost